26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944
ФЕВРАЛЬ
8
ЫТЛАРИКУН
27(6522) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă хыççăн Кривой Рог хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри тата Никополь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, тăватă кун хушши малалла тапăнса пырса, 45 километртан пуçласа 60 километр таран малалла куçнă, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ вырăна фронт тăршшĕпе 170 километр таран аслăлатнă.

Çак наступлени пирĕн çарсем, тăшманăн тăватă пехотнăй тата виçĕ танковăй дивизине çĕмĕрсе тăкса, Никополь хулинчен хĕвеланăçнерехре Апостолово хулипе пысăк чугун çул узелне, Никополь хулинчен хĕвелтухăçнерехри Марганец ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла йышăнса илнĕ, вара Никополь хулинчен инçех те мар анатри Днепр патне пырса тухнă.

Çапла вара пирĕн çарсем нимĕçсен Никополь районĕнчи пилĕк пехотнăй дивизирен ытла тăракан группировкине хĕвеланăçнелле чакма кирлĕ çулсене татнă.

Çапăçусенче Чуйков генерал-полковникăн, Глаголев генерал-лейтенантăн, Шарохин генерал-лейтенантăн, Шлемин генерал-лейтенантăн, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн Танасчишинăн, Глазунов генерал-майорăн, Фокапов генерал-лейтенантăн, Утвенко генерал-майорăн, Ручкин генерал-майорăн, Котов генерал-майорăн, Кузнецов генерал-майорăн çарĕсем, Артиллери генерал-лейтенанчĕн Неделинăн, артиллери генерал-майорĕн Пожарскин, артиллери генерал-майорĕн Ратован тата артиллери генерал-лейтенанчĕн Вознюкăн артиллерисчĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн Судецăн, авиаци генерал-майорĕн Толстиковăн тата авиаци генерал-майорĕн Шевченкăн летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ăлăнлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисене чăçсене „Апостоловски" тата „Нижнеднепровски" тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 6-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици Мускав, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ хăмăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, нимĕçсен оборонине татса Апостолово хулишĕн тата анатри Днепр çинче пынă çапăçусенче пулнăçкерсене, тав тăватăп.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи февралĕн 6-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 5-мĕшĕнче НАРВА хули енче пирĕн çарсем нимĕçсемпе НАРВА шывĕн хĕвелтухăç енне тăшманăн уйрăм ушкăнĕсенчен тасатасшăн çапăçнă, темиçе ял тытса илнĕ.

Пирĕн ЧУДСКИ кÿлĕ хĕррипе тата унтан хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем, малалла куçса пырса, темиçе ял тытса илнĕ.

Сиверский станцинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, СЕЛИЩЕ, СОСНОВО, ГУСИНКА, ПОДЛЕДЬЕ, МАЛЫЕ КОРЯЧИ, ВЕРЕСТ, ТВЕРДЯТЬ, СТАРИЦА, ПОЖНИ, ПЕХЕНЕЦ, МАЛАЯ ЯЩЕРА ятлă ялсене тата СОСНИЦЫ, ВЕРЕСТ, ЛИПОВЕЦ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ЛЮБАНЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă, НИКУЛКИНО, БОР, ВОЛКИНО, ФИЛИППОВИЧИ, ЗАГОРЬЕ, ЗАГОРОДИЦЫ, ВЯЖИЩЕ ятлă ялсене тытса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çăмăллăн куçса çÿрекен соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт пырса çапнипе тата тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр тунипе, Украинăри пысăк область центрĕсене—ЛУЦК, РОВНО хулисене тата ЗДОЛБУНОВ хулипе паха чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăнса илнĕ, вăл шутра Ровно облаçĕнчи район центрĕсене — ОСТРОГ хулине тата АЛЕКСАНДРИЯ, ДЕРАЖНО, РАФАЛОКА, КЛЕВАНЬ, ОЛЫКА ятлă ялсене, ВОЛЫНЬ облаçĕнчи КОЛКИ ятлă район центрне тата КРИВЕН, МОГИЛЯНЫ, ОСТРОВ, ИВАНКОВО, КВАСИЛОВ, ШПАНОВ, ОБАРОВ, ОРЖЕВ, КЛЕВАНЬ, НОВОСТАВ, ЦУМАНЬ, ОЛЫКА, АРМАНТЮВ, КИВЕРЫ, ЛЮБОМИРСК, ВОЛОШКИ, РЕЩУЦК, ГАЛЛЫ, РАФАЛОВКА ятлă чугун çул станцийĕсене. Çапăçусенче 2.000 çынна ытла тыткăна илнĕ, вăл шутра венгерсен çĕмĕрсе тăкнă 18-мĕшпе 19-мĕш пехотнăй дивизийĕсенче тăнă салтаксемпе офицерсем те пур.

ЗВЕНИГОРОДКА тата ШПОЛА хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтересшĕн ăнăçлăн çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕсе пырса, Киев облаçĕнчи ОЛЬШАНА ятлă район центрне, СЕМИГОРЫ, КОПНОВАТО, МАРТЫНОВКА, ДАРЬЕВКА, КРЕШАТИК, ШЕЛЕПУХИ, БЕРЕЗНЯГИ, ПЛЕВАКИ, ТУБОЛЬЦЫ, КУМЕЙКИ, БЕЛОЗЕРЬЕ, БАЙБУЗЫ, ВЕРБОВКА ятлă пысăк ялсене тытса илнĕ.

Çавăнпа пĕр вăхăтрах ЗВЕНИГОРОДКА хулинчен хĕвеланăçнерехрехра тата ШПОЛА хулинчен кăнтăрта пирĕн çарсем нимĕçсен çавăрса илнĕ çарĕсен ушкăнне пулăшма хăтланнă пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен контратакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

Февралĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 109 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 46 самолетне персе ÿкернĕ, вăл шутран 22 самолечĕ «Ю—52» йышши виçĕ моторлă транспортнăй самолетсем.

КА, ГОРОДИЩЕ ятлă пысăк ялсене тата СПОКОЙСТВИЕ, ДЕВЛАДОВО, ПАВЛОПОЛЬЕ, ЖЕЛТО-КАМЕНКА, МИРОВАЯ, МАРГЕНЕЦ ятлă чугун çул станцийĕсене. Çав çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсенне 128 танк, тĕрлĕ калибрлă 160 тупă, 245 пулемет пĕтерсе тăкнă; çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 12.000 вилли ытла выртса юлнă. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн çарсем, малтанлăха панă сведенисем тăрăх, çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем — 65, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—435, минометсем—156, пулеметсем—390, автомашинăсем—5.312, тракторсемпе тягачсем—49, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—655, тĕрлĕ складсем—16. Çав трофейăсенчен АПОСТОЛОВО районĕнче кăна пирĕн çарсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—45, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—130, хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—15 (вĕсенчен тăватташĕ «Фердинанд» йышшисем), зенитнăй тупăсем—25, автомашинăсем—3.000, паровозсем—14, вагонсем нумай тата боеприпас, апат-çимĕç, тĕрлĕ япаласен пысăк склачĕсем. Нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, тăшманпа хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 92 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 30 самолетне персе ÿкернĕ, вăл шутран 17 самолечĕ «Ю—52» йышши виçĕ моторлă транспорт самолечĕсем.

☆ ☆ ☆

Нарва хули енче нимĕçсем, Нарва шывĕн хĕвелтухăç хĕрринчи кĕпер умĕнчи укрепленисене хăйсен аллинче тытса хăварма хăтланса, темиçе хутчен те контратакăсем тунă. Пирĕн çарсем тăшмана тĕреклетнĕ пунктсенчен çапса кăларнă та паян Нарва хулинчен çурçĕртерехре çавăн пекех кăнтăртарахра та, Нарва шывĕн хĕвелтухăç енне нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Нарва шывĕ урлă каялла чакнă чухне тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Пĕр районра кăна пулеметпа персе 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшман пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Ровно хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса Ровно облаçĕнчи Острожец, Млынов, Мизочь ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата ытти темиçе яла йышăнса илнĕ. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен чăçсем 15 бронетранспортер, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 тупă, 28 хир тупи, 23 миномет, 87 пулемет тата 970 лаша тытса илнĕ. Тăшманăн, пĕр виллисене шута илсен те, 1.200 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Млынов ялĕнче нимĕç салтакĕсемпе венгер салтакĕсен пысăк ушкăнне тыткăна илнĕ.

* * *

Звенигородкăпа Шпола хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерешшĕн çапăçнă. Пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен чăçсем нимĕçсен оборонине йĕркерен кăларăççĕ, тĕреклетнĕ пунктсем хушшине кĕре-кĕре кайăççĕ те, флангсенчен пыра-пыра çапса тăшмана пысăк çухатусем кÿреççĕ. Пĕр соединени чăçĕсем çĕрле нимĕçсене атакăланă та темиçе ялтан çапса кăларнă. Тăшман пехотине пĕр полка çити аркатса тăкнă, 800 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Енер Ольшана ятлă район центрне йышăнса илнĕ çарсем нимĕçсенчен 26 тупă, 8 бронетранспортер, 100 ытла пулемет, 160 автомашина, боеприпас, апат-çимĕç склачĕсем тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Ольшанăшăн пынă çапăçура нимĕçсен 23 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппине пĕтерсе тăкнă. Çав ял урамĕсенче тăшманăн 1.660 виллине шутласа тухнă. Звенигородка хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман хăйĕн çавăрса илнĕ группировки патне татса кĕме хăтланнă. Пирĕн çарсем нимĕçсен пур атакисене те сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Ку участокра кун каçиччен нимĕçсен 80 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем темиçе кун каярах наступлени пуçласа янă та Кривой Рог хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата Никополь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре нимĕçсен оборонине татнă. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем Апостолово хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла йышăнса илнĕ. Пирĕн çарсем çав тери хăвăртлăн пырса çапнипе пула, нимĕçсен аркатса тăкнă дивизийĕсем хăйсен пĕтĕм артиллерине, боеприпасĕсене тата автомашинисене пине-пинĕпе пăрахса хăварса каялла чакаççĕ. Шолохово ятлă ял районĕнче нимĕçсен 15 танкне, 37 туппине, 900 автомашинине тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени боецĕсем тăшман тылне кĕрсе кайнă та, 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 140 тупă, 300 ытла пулемет тата 1.000 автомашина тытса илнĕ. Çавăн пекех тата апат-çимĕç, горючи тата ытти çар пурлăхĕн склачĕсене нумай тытса илнĕ. Пирĕн çарсем, малалла хăвăрттăн куçса пырса, Никополь хулинчен инçех те мар вырăнта анатри Днепр патне тухнă. Çапла вара тăшманăн 5 дивизирен ытла тăракан группировкине хĕвеланăçнелле чакма кирлĕ çулсене татнă.

* * *

Ровно облаçĕнче кĕрешекен отряд партизанĕсем çул хĕрринче засада тунă. Çав çулпа каялла чакакан нимĕçсен колонни иртсе пынă чухне совет патриочĕсем пулеметсемпе тата автоматсемпе пеме пуçланă. Гит-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

ФЕВРАЛĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 6-мĕшĕнче НАРВА хули енче пирĕн çарсем НАРВА хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра НАРВА шывĕн хĕвелтухăç енне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă.

СИБЕРСКИЙ станцийĕнчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

РОВНО хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Ровно облаçĕнчи ОСТРОЖЕЦ, МЛЫНОВ, МИЗУЧЬ ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, ытти темиçе яла йышăнса илнĕ.

ЗВЕНИГОРОДКА тата ШПОЛА хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерешшĕн çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, ДРАБОВКА, БУРТЫ, ПЕТРОПАВЛОВКА, ОЛЬХОВЕЦ, БЕРКОЗОВКА, КЛЮЧНИКИ ятлă ялсене тытса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем ЗВЕНИГОРОДКА хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшманăн хăйĕн унка лекнĕ группировкине пулăшма пыма васкакан танкĕсемпе пехотин атакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

Темиçе кун каярах УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, КРИВОЙ
РОГ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри тата НИКОПОЛЬ хулинчен
çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенчен наступлени пуçласа ярса, нимĕç-
сен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, тăватă кун хушши малалла
тапăнса пырса, 45 километртан пуçласа 60 километр таран малалла куç-
нă, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ вырăна фронт тăршшĕпе 170 кило-
метр таран аслăлатнă. Çак наступленире фронт çарĕсем тăшманăн тăва-
тă пехотнăй дивизине тата виçĕ танковăй дивизине çĕмĕрсе тăкнă.
АПОСТОЛОВО хулипе пысăк чугун çул узелне, МАРГАНЕЦ ятлă чу-
гун çул станцине тытса илнĕ, НИКОПОЛЬ хулинчен инçех те мар вы-
рăнта анатри ДНЕПР патне пырса тухнă. Çапла вара пирĕн çарсем ни-
мĕçсен НИКОПОЛЬ районĕнче вăрçакан пилĕк дивизирен ытла тăракан
группировкине хĕвеланăçнелле чакма кирлĕ çулсене татнă. Унсăр пуçне,
пирĕн çарсем халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла тытса илнĕ, вăл
шутра Днепропетровск облаçĕнчи СОФИЕВКА ятлă район центрне,
ЗЕЛЕНО-ПОЛЕ, КНЯЗЬ-ИВАНОВКА, НОВО-ВИТЕБСК, ЗЛАТОУС-
ТОВКА, ЕКАТЕРИНОВКА, МИХАЙЛОВКА, МАЛО-ВОРОНЦОВКА,
КАМЕНКА, БОЛЬШАЯ КОСТРОМКА, ШОЛОХОВО, ХМЕЛЬНИЦ-
КИЙ, АЛЕКСАНДРОПОЛЬ, ВЫСОКАЯ, ДМИТРИЕВКА, БОРИСОВ-

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ

СССР Верховный Совечĕ йышăннă законсем

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан ЗАКОН

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă ССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджетне, Союз Совечĕпе тата Национальноçсен Совечĕн Бюджет Комиссийĕсен доклачĕсем тăрăх йышăннă улшăнусене шута илсе, пĕтĕмпе доходсем енĕпе 249.575.982 пин тенкĕ чухлĕ тата расходсем енĕпе 249.575.982 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

2. Çак законăн 1-мĕш статьи тăрăх Союзăн бюджетăн доходĕсене тата расходĕсене доходсем енĕпе 214.746.836 пин тенкĕ чухлĕ тата расходсем енĕпе 214.746.836 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

3. Союзлă Республикăсен 1944 çулхи государство бюджечĕсене çакăн пек хисеппе çирĕплетес:

	Доходсем енĕпе (пин тенкĕпе)	Расходсем енĕпе (пин тенкĕпе)
Российăри Советлă Социализмлă Федеративлă Республика	24.265.623	24.265.623
вăл шутран: республикăри бюджет	12.872.605	6.102.119
вырăнсенчи бюджетсем	11.393.018	18.163.504
Украина Советлă Социализмлă Республика	3.640.071	3.640.071
вăл шутран: республикăри бюджет	3.118.531	1.617.039
вырăнсенчи бюджетсем	521.540	2.023.032
Белоруссии Советлă Социализмлă Республика	429.474	429.474
вăл шутран: республикăри бюджет	404.807	181.380
вырăнсенчи бюджетсем	24.667	248.094
Азербайджан Советлă Социализмлă Республика	1.011.986	1.011.986
вăл шутран: республикăри бюджет	769.854	408.786
вырăнсенчи бюджетсем	242.132	603.200
Грузи Советлă Социализмлă Республика	1.174.601	1.174.601
вăл шутран: республикăри бюджет	888.091	485.383
вырăнсенчи бюджетсем	286.510	689.218
Армян Советлă Социализмлă Республика	536.425	536.425
вăл шутран: республикăри бюджет	466.978	275.972
вырăнсенчи бюджетсем	69.447	260.453
Туркмен Советлă Социализмлă Республика	456.267	456.267
вăл шутран: республикăри бюджет	358.028	203.150
вырăнсенчи бюджетсем	98.239	253.117
Узбек Советлă Социализмлă Республика	1.877.068	1.877.068
вăл шутран: республикăри бюджет	1.205.575	755.665
вырăнсенчи бюджетсем	671.493	1.121.403
Таджик Социализмлă Советлă Республика	532.110	532.110
вăл шутран: республикăри бюджет	429.662	206.119
вырăнсенчи бюджетсем	102.448	325.991
Казах Советлă Социализмлă Республика	1.640.327	1.640.327
вăл шутран: республикăри бюджет	1.160.676	576.813
вырăнсенчи бюджетсем	479.651	1.063.514
Киргиз Советлă Социализмлă Республика	487.627	487.627
вăл шутран: республикăри бюджет	372.961	203.989
вырăнсенчи бюджетсем	114.666	283.638
Карело-Финн Советлă Социализмлă Республика	123.567	123.567
вăл шутран: республикăри бюджет	112.033	87.988
вырăнсенчи бюджетсем	11.534	35.579
Союзлă республикăсен государство бюджечĕсем тăрăх ПЕТЕМПЕ	36.175.146	36.175.146
вăл шутран: республикăсен бюджечĕсем	22.159.801	11.104.403
вырăнсенчи бюджетсем	14.015.345	25.070.743

4. Республикăсен бюджечĕсенчен АССР тата вырăнти советсен бюджечĕсене çакăн чухлĕ укçа уйăрса памаллине çирĕплетес:

	(пин тенкĕпе)
Российăри Советлă Социализмлă Федеративлă Республика	6.770.486
Украина Советлă Социализмлă Республика	1.501.492
Белоруссии Советлă Социализмлă Республика	223.427
Азербайджан Советлă Социализмлă Республика	361.068
Грузи Советлă Социализмлă Республика	402.708
Армян Советлă Социализмлă Республика	191.006
Туркмен Советлă Социализмлă Республика	154.878
Узбек Советлă Социализмлă Республика	449.910
Таджик Советлă Социализмлă Республика	223.543
Казах Советлă Социализмлă Республика	583.863
Киргиз Советлă Социализмлă Республика	168.972
Карело-Финн Советлă Социализмлă Республика	24.045
Пĕтĕмпе	11.055.398

5. 1944 çулта Пĕтĕм Союзри государство налогĕсемпе дохочĕсенчен республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсене çакăн чухлĕ укçа уйăрса памалла тăвас:

а) халăхран подоходнăй налог енĕпе пухăнкă укçаран РСФСР, Украина ССР, Белоруссии ССР, Азербайджан ССР, Грузи ССР, Туркмен ССР, Узбек ССР, Казах ССР, Киргиз ССР бюджечĕсене 10 процент тата Армян ССР, Таджик ССР, Карело-Финн ССР бюджечĕсене 100 процент;

б) колхозсенчен подоходнăй налог енĕпе пухăнакан тата колхозниксемпе единоличниксенчен ялхуçалăх налогĕ енĕпе пухăнакан укçаран 25 процент;

) военнăй налог енĕпе пухăнакан укçа-тенкĕрен 5 процент;

г) машинно-тракторнăй станцисен дохочĕсенчен, Узбек Советлă Социализмлă Республикĕсĕр пуçне, Союзлă мĕнпур республикăсен бюджетне—25 процент, Узбек ССР бюджетне—10 процент;

д) халăх хушшинче тата колхозсенче сарнă государство заемĕсен пĕтĕм суммичен—15 процент.

6. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечне, оборотран илекен налогран Союзлă республикăсене укçа-тенкĕ уйăрса пама СССР Верховный Совечĕ çирĕплетнĕ суммăсемпе килĕштерсе, çав налогран кашни союзлă республика тăрăх укçа уйăрса памалли процентсене палăртса пама хушас.

7. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечне Молдаван ССР, Литва ССР, Латви ССР тата Эстони ССР-ĕсен 1944 çулхи бюджечĕсене пăхса тухма хушас.

8. ССР Союзĕн государство бюджетне пурнăçа кĕртнин отчечĕсене: 1940 çулшăн доходсем енĕпе 180.241.347 пин тенкĕ тата расходсем енĕпе 174.350.150 пин тенкĕ, доходсене расходсенчен 5.891.197 пин тенкĕ ытларах ÿстерсе; 1941 çулăн доходсемпе расходсем енĕпе 191.398.065 пин тенкĕ тата 1942 çулшăн доходсемпе расходсем енĕпе 182.841.434 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

леровецсем хушшинче паника пуçланса кайнă. Партизансем атакăна кĕрсе кайнă та, алă вĕççĕн çапăçса, 170 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Темиçе тупă, 200 автоматпа винтовка тата боеприпас турттарса пыракан 30 лава тытса илнĕ.

* * *

Совет Информаци Бюровĕн январĕн 10-мĕшĕнчи пĕлтерĕвĕнче тыткăна лекнĕ Карл Буккем обер-ефрейтор каласа панине пичетленĕччĕ. Вăл унта çапла каланăччĕ: нимĕçсен 106-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ Форст генерал-лейтенант Украинăра хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем пурăнакан çуртсене хăй аллипе вут тивертсе янине эп хам курнă, — тенĕччĕ. Нумаях пулмасть пирĕн çарсем Форст генералăн дневникне тата вăл 106-мĕш пехотнăй дивизи тăрăх панă приказсене тытса илнĕ. Нимĕçсем тытса илнĕ совет районĕсенче нимĕç салтакĕсем вырăнти халăхпа мĕнле пурăнмалли çинчен каласа кан приказра Форст нимĕç салтакĕсене «нимĕн хĕрхенсе тăмасăр алари хĕçпăшала хута яма» хушать... Вăл хăйне пăхăнакансене çапла вĕрентет: «Еçе хăвăрт туса хуни нумайччен шухăшласа тăниччен е аслисенчен ыйтса тăниччен часрах çитĕнӳсем тума май парать. Яланах тенĕ пекех çийĕнчех персе пăрахас пулать... Тăвăш чĕреллĕ пулма кирлĕ мар... Вырăнти халăха асап кăтартассипе хăратас пулать, заложниксем илес пулать... Нимĕç салтакĕ, вăл кирек хăш чинра тăрать пулсан та, вырăссем умĕнче хăйне хăй пуçлăх пулса тăнине пĕлмелле, вара çавăн пек хăйне хăй тыткаламалла тата çавăн пек ĕçлемелле».

Иккĕленсе тăмалли çук, Форст вăл ĕçе пĕлекен палач, анчах та нимĕç юрăхсăр генерал. Вăл хăйĕн дивизине çухатса пĕтерне, çав тери хăвăрт васкаса тарса, хăйĕн штабĕнчи документсемпе дневникне те пăрахса хăварнă. Ку хутра Форст тарса хăтăлма пултарнă. Анчах та нимĕçсен генерал формине тăхăннă çынçисен айăпланакансен пуканĕ çинче ларассинчен хăтăлаймĕ, совет çĕрĕ çинче тунă хăйĕн мĕнпур преступленийĕсемшĕн унăн ответ тытмаллах пулĕ.

Н. С. Хрущев—Украина Совнаркомĕн Председателĕ

КИЕВ, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). УССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1944 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх, Н. С. Хрущев юлташа Украина ССР-ĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ пулма уйăрса лартнă.

Л. В. Корниец юлташа Украина ССР-ĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Паянах УССР Верховный Совечĕн Президиумĕ, ССР Союзĕн Верховный Совечĕ 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче йышăннă закон тăрăх, Украина ССР-ĕн Ют çĕршыв Еçĕсен Халăх Комиссариатне тунă. УССР-ĕн Ют çĕршыв Еçĕсен Халăх Комиссарĕ пулма А. Е. Корнейчук юлташа уйăрса лартнă.

Совет Союзĕн Геройĕпе—Квитков юлташпа тĕл пулни

Совет Союзĕн Геройĕ Квитков юлташ февралĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарти пионерсен çуртĕнче всевобуч боецĕсемпе тĕл пулчĕ.

Квитков юлташ всевобуч боецĕсене Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнчи çапăçусем çинчен, Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăрлăхĕпе хăюллăхĕ çинчен каласа пачĕ, всевобуч боецĕсене вĕренӳре çирĕп дисциплинăллă пулма, вăрçă техникине отлично вĕренме сунчĕ.

Тăван çĕршывăн мухтавлă ывăлне — Совет Союзĕн Геройне саламласа сăмах каланă всевобуч боецĕсем Журавлев тата ытти юлташсем те отлично вĕренме, Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем пек пулма сăмах пачĕç.

И. БЕЛОВ.

Всевобучăн 6-мĕш черетри вĕренĕвĕ

Республикăри всевобуч пункчĕсем Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа фронт валли вунşар пин тĕрлĕ çар специальноçĕсене пĕлекен боецсем хатĕрлерĕç.

Всевобучăн 5-мĕш черетри вĕренĕвĕнче чылай районсем (Пăрачкав, Советски, Канаш, Шупашкар т. ыт. те) программăна пур пайсем тăрăх та ăнăçлăн вĕçлерĕç. Анчах та хăшпĕр районсенче (Элĕк, Калинино, Сĕнтĕр) штыкпа алă вĕççĕн çапăçма, стройпа утма, сапер ĕçне вĕренес енĕпе боецсене тарăн пĕлӳ паймаи.

Çак çулхи январĕн 15-мĕшĕнче республикăра всевобучăн 6-мĕш черетри вĕренĕвĕ пуçланчĕ. Вĕренӳ пункчĕсенче командир-инструкторсем пулса ĕçлеме Отечественнăй аслă вăрçăра пулнă çынсене уйăрнă. Кувакино, Улатăр, Йĕпреç, Çĕрпӳ тата ытти районсенче те боевой тата вĕренӳ хĕçпăшалĕсемпе йĕлтĕрсене çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ.

Всевобуч пункчĕсенче ĕнтĕ хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ. Вĕренĕвĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах боецсен çар дисциплинине пăхăнса пыма вĕренмелле. Занятисене çуçтра ларса çеç мар, уçă вырăнсенче нумайтарах ирттермелле. Вĕренӳ сехечĕсем пĕтнĕ хыççăн ГТО, ПВХО нормисене парассине йĕркелемелле. Çамрăк боецсен хушшинче çарти пек çирĕп дисциплина туса хумалла. Вĕсене службăра хăйсенчен аслăраххисене хисеплеме, Хĕрлĕ Çара юратма тата тăван çĕршыва чунтан парăнса кĕрешме вĕрентмелле.

С. ЛАВРИНОВИЧ,
ЧАССР военкомачĕн всевобуч отделĕн старши инспекторĕ.

Хĕрлĕ Çар кунне çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ

ÇЕМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Предприятисемпе промысла артелĕсенче Хĕрлĕ Çар кунне хатĕрленесси анлăн саралса пырать. Кашни коллектив çав паллă куна производствăра çĕнĕ çитĕнӳ тунипе паллă тума хатĕрленет.

Апат-çимĕç комбиначĕн коллективĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, квартал планне 110 процент тултарма, ĕç тухăçлăхне 10 процент ӳстерме обязательство илнĕччĕ. Çакна рабочисем тивĕçлĕн пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем хушшинче халь нормăна тултарайманнисем пачах та çук. Фазлетдинова, Смородинова, Суворова стахановецсем куллен икшер норма тултараççĕ.

Мăн Улхашри «Лесоруб» артель, иртнĕ çулхи производство программине 2 уйăх малтан тултарса, планран ирттерсе 173 пин тенкĕлĕх продукци пачĕ. Коллектив кăçал та тухăçлăн ĕçлет. Вăл январьпе февраль уйăхĕсен планне Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă кун тĕлне тултарма обязательство илчĕ. Вăтамран илсен, халĕ рабочисем кашни кунхи плана 110—115 процент тултараççĕ. Малта пыракан работницăсем Зайцева, Орлова тата столяр Глотов нормăна 2—2,5 хут ирттерсе тултараççĕ.

«Партизан», «Красный Октябрь» артельсем те Хĕрлĕ Çар кунне икĕ уйăхри задание тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче тата ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Совхозсен Халăх Комиссариатĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тата ССР Союзĕнчи Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Совхозсен Халăх Комиссариачĕ, совхозсемпе колхозсенчи ялхуçалăх ĕçне хутшăннă шкулсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи итогĕсене пăхса тухнă хыççăн, Чăваш республикинчи Кувакино районĕнчи Турдаксăри туллимар вăтам шкула (директорĕ Тихонова юлташ) РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн пĕррeмĕш премине пама йышăннă.

Шкул ачисем киносемпе театрсене çӳремелли çĕнĕ йĕрке

РСФСР Наркомпросĕ шкул ачисемшĕн киносене, театрсене тата çавăн пек ытти вырăнсене çӳремелли çĕнĕ йĕрке тунă. 16 çула çитмен ачасене вĕренӳ кунĕсенче шкул пуçлăхĕ ирĕк памасăр киносемпе театрсене çӳреме чарнă.

Шкул директорĕсене шкул ачисене киносемпе театрсене урoксем пĕтсен çеç тата организованнăй йĕркепе çеç çӳреме ирĕк пама хушнă, шкул ачисене вара çитĕннĕ çынсем—учительсем, пионер вожатăйĕсем ертсе пымалла. Киносемпе театрсене кайма ирĕк панă чухне кашни вĕренекен мĕнле вĕреннине, хăйне хăй мĕнле тыткаланине, унăн вĕренӳ ĕçĕ тата килти ĕçсем мĕн чухлĕ пуррине, çавăн пекех тата репертуар ачасене вĕрентсе ӳстермелли требованисене хирĕç пыманнине [illegible] илмелле. (ТАСС).

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запас пайсем пĕтĕмпех вăхăтра парар

Вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине туса ирттермелли хатĕрленес вăхăтăн татаклă та ответлă кунĕсем çитрĕç. Колхоз хресченĕсем, Сталин юлташ вĕсен ĕçне Октябрьти Социализмлă Аслă революци 26 çул тултарнă кун тунă хăйĕн докладĕнче пысăк хакланипе хавхаланса, çуракине — çак 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсенчен чи ответлă ĕçе ирттерме пикенсех хатĕрленеççĕ. Çитес çуракине колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисем пур енчен те лайăх хатĕрленсе, агротехникăна пурнăçласа кĕске вăхăтрах ăнăçлăн ирттерчĕр тесе, партипе правительство пур майсемпе те колхозлă яла пулăшса пыраççĕ.

Пирĕн чаплă та паттăр Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пырса, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ тăван çĕре кашни кунах тăшманран тасатса пырать. Çак çĕр лаптăкне вăхăтра акса хăварас, унтан пысăк тухăçлă тырпул туса илсе Хĕрлĕ Çара тĕштырă, пахча-çимĕç, промышленноçа валли чĕртавар çителĕклĕ таран парас задача тăрать.

Çакăнтан ĕнтĕ, парти, совет тата çĕрĕç органĕсен умĕнче мĕнтери пысăк та ответлă задачăсем тăни пуриншĕн те паллă. Вăл задачăна ăнăçлăн татса парас тесен, нумай вăй тата пикенсе ĕçлени кирлĕ. Çак ответлă задачăна пурнăçлама колхозри хресченсемпе çĕрĕç органĕсене пирĕн промышленность пулăшмалла. Вăл, фронта кирлĕ продукцисем панипе пĕрлех, тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запас пайсем туса памалла.

Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленине пурнăçласа майпа, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тата пирĕн республикăн Совнаркомĕ оборонăллă промышленноçăн предприятийĕсене пĕррeмĕш кварталта çителĕклĕ таран запаслă пайсем хатĕрлеме хушрĕç. Пирĕн предприятисенче ĕçлекенсем çак боевой задание, çар заказĕсене тунă пекех, пĕр пăркаланмасăр вăхăтра пурнăçламалла.

Республикăри оборонăллă предприятисене ертсе пыракансем тата вăл предприятисенчи парторганизаци руководителĕсем çак ответлă заданисене пурнăçланă чухне çакна яланах асра тытмалла: тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запас пайсем хатĕрлени вăл çитес çуракине ăнăçлăн ирттерме тата пысăк тухăçлă тырпул туса илме пулăшни пулать. Çавăнпа та тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли пайсене хатĕрлесси çине ответсăр пăхни пирĕн çĕршывăн оборонăллă вăй-хăватне сиенлени пулать.

Кăçалхи çулхи пĕрремĕш кварталăн пĕр уйăхĕ иртрĕ. Республикăри оборонăллă промышленноçăн предприятийĕсем çак ĕçе мĕнле пурнăçласа пынине пăхса тухма халĕ тивĕç ĕнтĕ. Чылай предприятисен руководителĕсем çак задачăна тĕрĕс ăнланса илнĕ, çавăнпа та вĕсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене валли запас пайсем хатĕрлес пирки панă заданисене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ.

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен Еçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запас пайсем хатĕрлемелли кварталти плана январь уйăхĕнче 68 процент пурнăçланă, çав шутрах 7 тĕрлĕ пайсене тăвассине ытлашшипех тултарнă.

Заводри парти организацийĕ завод руководителĕсемпе пĕрле çак задани мĕнле пысăк вырăн йышăннине хăйсен коллективне тĕплĕн ăнлантарса панă. Завод коллективĕ вара кварталти плана срокчен тата ытлашшипех тултарма обязательство илнĕ. Çак коллектив хăйсем çине илнĕ обязательствăсене яланах пурнăçласа пыни пирки тата вĕсен сăмахĕ ĕçрен уйăрălса тăманни пирки иккĕленме çук, вĕсем ку ĕçре те хăйсем çине илнĕ ĕçе чыслăн пурнăçлассине çирĕппĕнех шанса тăма пулать.

Запас пайсене тăвас плана пурнăçлас пирки Канашри вагонсем юсакан завод та лайăх ĕçлет. Завод начальникĕ Поздняков юлташ, партбюро секретарĕ Егорушкин юлташ запас пайсене мĕнле туса пынине тата вĕсене тăвас графика мĕнле пурнăçланине куллен контрольлесе тăраççĕ. Çапла ĕçленин итогĕсем вара куç умĕнче. Запас пайсем тăвас январь уйăхĕнчи плана завод 106 процент пурнăçларĕ. Слуцкий юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод та январь уйăхĕнче кварталти плана 40 процент пурнăçларĕ.

Çак ĕçĕн ăнăçлăхĕ татах та пысăкрах пулĕччĕ, анчах хăшпĕр организацисене ертсе пыракансем çаврăнăçусăрри, васкаманни ĕçе чăрмантарать. МТС-семпе колхозсене запас пайсем таратас пирки ĕçлекен ялхуçалăх снабжени пуçлăхĕ Маркин тата Автотрактороcбыт—Марков юлташсем хăйсен ĕçĕсене час-часах тимсĕр тата сӳрĕк туса пыраççĕ. Вĕсем запас пайсем хатĕрлес пирки заводсемпе договорсене вăхăтра тумаççĕ, тăсса пыраççĕ тата заводсене техникăллă кăтартусене вăхăтра памаççĕ.

Сăмахран, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод 1943 çултах запас пайсем туса хатĕрленĕ. Çав пайсене Автотрактороcбыт начальникĕ Марков юлташ, тĕрлĕ сăлтавсем тупса, темиçе уйăх хушши илмесĕр тăсса пынă, ВКП(б) Обкомĕ хушнипе тин вăл январь уйăхĕнче илнĕ. Ку тĕслĕх çак организацийĕн руководителĕсем тимсĕр пулни çинчен каламасть-и вара?

Автотрактороcбытпа сельхозснабăн руководителĕсем договор тунипе кăна лăпланса лармалла мар, вĕсем заводсемпе куллен çыхăнса тăмалла, вĕсене запас пайсене хатĕрлемелли плана хăвăртрах тата пахалăх енчен лайăхрах пурнăçлама пулăшса пымалла.

Анчах та, запас пайсене хатĕрлес ĕçре чылай çитĕнӳ тунă заводсемпе пĕрлех, çак ĕç çине хакламасăр пăхакан, унăн ответлăхне туйса илмен предприяти руководителĕсем те пурха.

ВКП(б) Мускав Обкомĕн тата Мускав Хула Комитечĕн секретарĕ А. С. Щербаков хăйĕн «Мускаври парти организацийĕн черетри задачисем çинчен» тунă докладĕнче çапла каларĕ: «Тракторсем вунă çул каярах тата унтан та ытларах ĕçе кĕчĕç, кивелчĕç, вĕсене пикенсех юсамалла. Юсамашкăн запас пайсем кирлĕ. Запас пайсене халĕ ĕлĕкхи пек пĕр организаци урлă илсе тăма çук. Çавăнпа та ĕнтĕ правительство запас пайсене хатĕрлес пирки предприятисене заказ пама облаçсенчи партипе совет органĕсене ирĕк пачĕ. Çапла ĕнтĕ, тракторсене вăхăтра тата лайăх юсама кирли пуриншĕн те паллă пек курăнать. Тырпулсăр, çĕрулмисĕр, пахча-çимĕçсĕр, продовольствисĕр ăнăçлă çапăçма çукки пуриншĕн те паллă пек курăнать. Çара тата хуласене тăрантармалла. Анчах та бюрократсемпе хăйсен ведомствине арлансем пек кĕрсе ларса хăйсен сăмсисенчен аякка курма пултарайман çынсем пĕтмен-ха иккен. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запас пайсем хатĕрлессине хăшпĕр предприятисен директорĕсем ирĕксĕрлесе панă ĕç вырăнне хураççĕ, вăл ĕçе пурнăçлама та, пурнăçламасăр хăварма та пулать, текеннисем те тупăнаççĕ-ха». Пирĕн республикăри предприятисен уйрăм руководителĕсем Щербаков юлташ каланисем пек мар-и? Шел, анчах та çавăн пек. Марченко юлташ парторганизаци секретарĕ пулса ĕçлекен заводăн руководителĕ çак вăхăта çитсе те тĕрлĕ сăлтавсемпе запас пайсем тăвас плана пурнăçлама тытăнман. Темиçе кун каярах Наркоматран тӳррĕмĕн задани илнĕ хыççăн тин запас пайсене хатĕрлеме тытăнать. Запас пайсене хатĕрлес ĕçре çак заводри парторганизаци те тĕрĕс мар çул çине тăнă, анчах та хула комитечĕ унăн тивĕççĕр ĕçне курмасть, плана мĕн пирки тултарманнин сăлтавĕсене тупса, запас пайсене хатĕрлес ĕçе йĕркелеме тăрăшмасть.

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводăн руководителĕсем те çаплах начар ĕçлеççĕ, кунта та тивĕççĕр сăлтавсемпе январь уйăхĕнчи плана пурнăçлама тытăнман. Çак руководительсем задание пурнăçламасăр, хăйсен çаврăнăçусăрлăхне тата ответсăрлăхне пула, çуракине хатĕрленес пĕтĕм ĕçе сиен кӳнине ăнланса илмелле. Запас пайсене хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле, ĕçе халех çине тăрса пурнăçламалла.

Республикăри оборонăллă предприятисен руководителĕсем тата парти организацийĕсене ертсе пыракансем, боеприпассемпе хĕçпăшалсене хатĕрленĕ чухне ĕçленĕ пекех, запас пайсене хатĕрленĕ ĕçре те оперативлă, пĕтĕм вăйхала хурса ĕçлемелле. Оборонăн Государственнăй Комитечĕ панă запас пайсем тумалли задание срокра, пĕтĕмпех тата лайăх пахалăхлă пурнăçламалла. Заводри парти организацийĕсем халĕ çак заданисен пĕлтерĕшĕ çинчен рабочисем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн сарса ямалла. Парти организацийĕн руководителĕсем запас пайсене тăвасси мĕнле пынине кашни кун сăнаса контрольлесе тăма тивĕç.

Кăçалхи çул çуракине ăнăçлă ирттересси — республикăри пур парторганизаци ĕçĕ, пĕтĕм промышленноçăн ĕçĕ пулса тăрать.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запас пайсем хатĕрлессине срокчен тата лайăх пахалăхлă тултарассишĕн большевикла кĕрешни кашни предприятишĕн чыслă та хисеплĕ ĕç. Çак ĕçе ăнăçлăн пурнăçлани нимĕçсен фашистла захватчикĕсене — чи курайман тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшни пулать.

КРЫЛОВ,
ВКП(б) Обкомĕн секретарĕн заместителĕ.

ТАСС опровержениЙĕ

Ют çĕршывсенчи хаçатсем юлашки эрнере çырнă тăрăх, Совет правительстви, союзниксене пăхмасăр, хăй пĕччен Финляндипе уйрăм килĕшӳ тăвасси çинчен калаçать пулать, Совет Союзĕ Финляндие ультиматум панă пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çав хыпарсем пĕртте тĕрĕс мар.

Ют çĕршывсенче

Болгари парламенчĕн ларăвĕнче

СТАМБУЛ, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Софирен пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 25-мĕшĕпе 26-мĕшĕнче Болгари парламенчĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Лару парламентăн çурри ишĕлнĕ çуртĕнче пулнă. Сывлăшран пăрахнă бомбăсем кӳнĕ сиене пĕтерес тĕлĕшпе темиçе закон йышăннă. Опозици правительствăна питĕ хытă критикăланă, политикăна халех улăштарма тата Германипе çыхăну татнине пăрахма хушнă. Лару вăхăтĕнче парламент çурчĕ патĕнче çарсен грузовой машинисем тăнă, вĕсене унта сывлăшран тапăнни çинчен пĕлтерес пулсан депутатсене хула тулашне илсе кайма тăратнă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ЕÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче американецсен чаçĕсем тусем çинче Кассино хулинчен çурçĕрелле куçнă. Кассино хулипе пĕтĕçсе ларнă поселоксенче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Америкăн 5-мĕш армийĕн фрончĕн çурçĕрти секторĕнче союзниксен çарĕсем тăшман атакисене ăнăçлăн сирсе янă. Акăлчансен чаçĕсем Анцио районĕнчи фронтра тăшманăн вăйлă контратакисене сирсе янă.

Февралĕн 4-мĕшĕнче союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем Тулон хулине тапăннă. Союзниксен авиацийĕ Кьети тата Рим хулисен районĕсенче тăшманăн автомобиль транспортне тапăннă. Истребитель-бомбардировщиксем Шибеник районĕнче (Югославия) тăшман судникисене атакăланă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ЕÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Акăлчансемпе американецсем пĕрле кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Америка авиацийĕ нимĕçсен пысăк промышленность центрĕ тата паха чугун çул узелĕ пулса тăракан Франкфурт хулине, çавăн пекех тата Хĕвеланăç Германири ытти объектсене те тапăннă. Çав операцирен хăйсен базисене 21 бомбардировщикпе пĕр истребитель таврăнман.

Лондонра официально çапла пĕлтерне: февралĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă.

Февралĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла каллех Çурçĕр Францири çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ШВЕЙЦАРИ САМОЛЕЧĔСЕМ ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔПЕ ÇАПĂÇСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: февралĕн 6-мĕшĕнче каçхине Швейцарири радио официально çапла пĕлтерне: «Паян каçхине Адольфен районĕнче Швейцари оборонинче тăракан самолетсен эскадрильи Швейцари чикки урлă вĕçсе каçнă Германи самолечĕпе пĕр кĕске вăхăт хушши çапăçса илнĕ. Германи самолетне сиенленĕ, анчах вăл çапах та каялла Германи территорийĕ çине вĕçсе кайнă.

ЯПОНИРЕ ЧЫЛАЙ ХУЛАСЕНЧИ ХАЛĂХПА ПРОМЫШЛЕННОÇА УРĂХ ВЫРĂНА КУÇАРМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Японецсен «Асахи» ятлă хаçачĕ çапла çырать: Парламент членĕ Кубои кĕçĕн палатăн бюджет комиссийĕнче хуласенчи халăхпа промышленноçа урăх вырăна куçарасси çинчен ыйтнă. Çав ыйтăва хирĕç ответлесе, шалти ĕçсен министрĕ Андо çапла каланă: урăх çĕре питĕ кирлĕ заводсем вырнаçса ларнă районсенчи тата халăх ытла та тăкăс пурăннипе калла-малла нумай куçса çӳрени хăрушлăх кăларса тăратакан районсенчи, çавăн пекех тата сывлăшри оборонăна йĕркелеме кирлĕ пек условисем çук районсенчи промышленноçпа халăха куçарма йышăннă, тенĕ. (ТАСС).

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ СОВЕТ ЭСТОНИН ХАЛĂХНЕ ГЕРМАНИЕ ХĂВАЛАСА КАЯÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци хаçачĕсем çапла пĕлтереççĕ: нимĕçсем Эстони халăхне, хăйсен пӳрчĕсенчен ирĕксĕр хăваласа кăларса, Германие яраççĕ. Таллин хулинче чрезвычайнăй положени туса хунă. Ирĕк памасăр хуларан никам та тухма пултараймасть, хулана та никам пырса кĕме пултараймасть. Пур çулсене те питĕрсе лартнă. Чугун çулсем тăрăх ахаль халăха çӳретме пачах чарса лартнă.

Нимĕçсен оккупаци влаçĕсем каларнă приказ тăрăх, Эстонири гражданла халăха ирĕксĕр урăх çĕре куçараççĕ.

РУЗВЕЛЬТ КОНГРЕСА ЯНА ПОСЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран çапла пĕлтерет: Президент Рузвельт конгреса янă посланире хĕçпăшаллă вăйсен членĕсене президента суйлас ĕçе хутшăнтарас пирки çырнă законопроект статьине сивленĕ. Вăл статьяра çапла каланă пулнă: ют çĕршывсенче пурăнакан Америка салтакĕсем хушшинче сасăсене Америка правительстви мар, уйрăм штатсем шутлаççĕ, тенĕ пулнă. Вăл законопроекта сенат ырланă та ĕнтĕ. Президент çапла каланă: «Пирĕншĕн тата пирĕн таса ирĕклĕхшĕн кĕрешме хатĕрленекен тата кĕрешекен салтаксемпе моряксене вăл законопроект ултавать тесе шутлатăп эпĕ», тенĕ.

АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ МИХАЙЛОВИЧ ÇИНЧЕН

«Дейли геральд» хаçат Михайловичăн тăшманпа çыхăнса ĕçленине кăтартакан çĕнĕ фактсем палăрни çинчен çырать.

«Ньюс кроникл» хаçат çапла çырать: «Югославин тĕрлĕ пайĕсенче манăн çарсем районсемех йышăнса тăраççĕ, вĕсем нимĕçсене хирĕç ăнăçлăн çапăçаççĕ, тесе генерал Михайлович калани нихăш енчен те чăн пулма пултараймасть. Хăш районта та пулин нимĕçсем Михайлович çарне тапăннине пĕлтерекен нимĕнле факт та çук. Территори тытса илни çинчен Михайлович пĕлтерни те тĕрĕс мар. Михайлович аллинче мĕн пурĕ те Кăнтăр Сербире пĕр-лĕринчен уйăрăлса тăракан вунă участока яхăн кăна. Сербин ытти пайĕсене нимĕçсем, Недич çарĕсем тата Çурçĕрте партизансем контрольлесе тăраççĕ. Черногорире пĕтĕм территорин 60 процентĕ партизансен аллинче, ытти территори нимĕçсен аллинче тата нимĕçсемпе пĕр каварлă четниксен аллинче. Далмацире сводкăра кăтартакан тухырçисем нимĕç çарĕсемпе четниксен аллинче. Вĕсен командирĕ — нимĕçсем майлă Джунч Михайлович нихăçан та официальнăй йĕркепе унтан пăрăнман. Çав четниксем шоссе çулĕпе чугун çулсене нимĕçсемшĕн сыхласа тăраççĕ. Мусульмансен лидерĕ Хуска (вăл 2.000 мусульманпа пĕрле Михайлович патне пыни çинчен коммюникере пĕлтернĕччĕ) чи паллă усташасенчен пĕри пулса тăрать. Çӳрекен хыпарсене пĕтерес шутпа çаксене пĕлтерме кирлĕ пулчĕ». (ТАСС).

КĔСКЕН

Чикагăра бомбардировщиксем валли моторсем тăвакан завод уçăлнă. Çав завод США-ри заводсенчен чи пысăкки шутланса тăрать. Çĕнĕ завод 19 çуртра вырнаçнă, вĕсенчен чи пысăкки 35 гектар вырăн йышăнса тăрать. Çав заводра 25.000 çын ĕçлемелле.

* * *

Юлашки икĕ çул хушшинче Атлантика океанĕн хĕвеланăç пайĕнче союзниксенне тата вăрçа хутшăнман çĕршывсенне 700 суднăна яхăн путарнă, çав шутра Пĕрлешӳллĕ Штатсенне 281, Англинне 130, Норвегинне 68, Панамăнне 39, Бразилинне 24, Голландинне 24, союзлă ытти çĕршывсенне 35 судно путарнă. 1942 çулта 582 судно путарнă, 1943 çулта 95 судно çеç путарнă. (ТАСС).

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

СССР Наркомфинĕн 1939 çулхи мартăн 28-мĕшĕнчи 178/36 номер тата 1941 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнчи 504/75 номер инструкцийĕсем тăрăх, Шупашкар хулинчи государство, хуçалăх тата кооперации организацийĕсемпе предприятийĕсем, тавар сутса тупнă укçаран тата япала сутмасăр тупнă укçаран налог тӳлекенскерсем, Шупашкар хулинчи финанс отделне 1943 çулшăн çав тӳлевсене шутласа хупнă отчетсене тăратмалла, вăл отчетсене çӳлерех асăннă организацисем 1943 çулшăн çулталăкри балансем тăратма кăтартса панă сроксенчен кая юлмасăр тăратмалла.

Çулталăкри налог отчечĕсене тăратманшăн е вăхăтра тăратманшăн предприятисен руководителĕсене тата налог отчечĕсем тумалли çынсене штраф тӳлеттереççĕ.

Шупашкарти Горфо.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.